**Чунармань**

Шыв армань-и эс
Е çил арманĕ – чун-чĕрем?
Тĕрлĕ шухăш авăртан самантсерен,
Каллĕ-маллĕ хутласа халтăртататăн,
Тĕлсĕр çилĕн урăм-сурăм
тулашатăн.

Е хĕвеллĕ кунăн – йăлтăр!
Е эс ăмăр... Пурте пултăр,
пурте пултăр, пурте пултăр! –
Чун тени вăл тем те куртăр.

Пуçăмра – çӳçеллĕ тутăр,
çӳçине çил вĕçтерет.
Мĕн вырăнне мана хутăр? –
тĕрĕсне кам пĕлтерет?

Çил арманĕ, шыв арманĕ,
ал арманĕ авăртать,
Арман чулĕн çивĕч шăлне
шăйра-шăйра мăкатать.
Арман – йывăр çуначĕпе
тӳпенелле туртăнать,
Пĕр çĕкленсе, пĕр кукленсе –
çăнăх сапса, хывăх сапса
Шыва, çĕре чӳк тăвать,
кăштăртатса çаврăнайса
Çавра юрăсем хывать.

Çын ăшĕнчи тĕнчере те
çитмĕл çичĕ вăй вылять,
Çын ăшĕнчи тĕнчере те
чунармань кăлтăртатать.

*Асамат, С. Чунармань / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 541.*